24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
СЕНТЯБРЬ
5
ЭРНЕКУН
209 (5924) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

КĔЛТЕСЕНЕ КАПАНА ХЫВАС ТАТА АВĂН ÇАПАС ĔÇСЕНЕ ХĂВĂРТ ТУСА ПЫМАЛЛА

Уборка кăçал вăрçă пынă вăхăтра пулса иртет. Вăрçă вăхăтĕнче ĕç условийĕсем те ăраспа. Пĕтĕм ĕç вăрçă интересĕсене пăхăнса тăмалла. Ĕçре черетлĕх пулмалла мар, пур ĕçе те хăйĕн вăхăтĕнче тата пысăк пахалăхпа туса пыни кирлĕ. Çакна нумай колхозсем лайăх ăнланаççĕ, ăна кулленхи хĕрӳллĕ ĕçре кăтартса параççĕ.

Кăçал пирĕн республикăри колхозсем пуян тырпула пухса кĕртме иртнĕ çулхинчен лайăхрах хатĕрленсе тухрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем уй ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа тăваççĕ. Вĕсем обществăлла хуçалăхăн ĕç дисциплинине куллен çирĕплетсе пыраççĕ, пур çĕрте те ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса ĕçлеççĕ. Пăлапуç Пашъелĕнчи «Комсомолец» колхоз (Первомайски р.), вырса пуçтарнă кĕлтесене итем çине турттарса хаклă вăхăта сая ярас мар тесе, уйрах итем туса авăн çапассине организациленĕ. Колхозра ачаллă колхозницăсен ĕçне çăмăллатассишĕн куллен тăрăшаççĕ, вĕсен ачисем валли уборка пуçланнă кунах яслĕ уçса панă. Çапла туни уй ĕçне планпа пăхнинчен чылай маларах вĕçлеме май парать. Çавăн пекех Кĕçĕн Кипек ялсоветне кĕрекен «Волга» колхозра та (Вăрнар р.) ĕç вăйĕпе туллин усă кураççĕ. Колхоз çурхи тырăсене пысăк пахалăхпа пухса кĕртнĕ. Тырпула пуçтарса кĕртнĕ çĕрте кулленех 211 çын таран ĕçленĕ, пĕр çын та ĕçсĕр ларман. Пурте пĕр семьери çынсем пек, пĕр шухăшпа—лайăхрах ĕçлесе фронта ытларах пулăшас шухăшпа ĕçлеççĕ. Павел колхозĕ вырнă тырпула çийĕнчех капана хывса пырать, авăн çапать, государствăна тырă леçсе парать. Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец» колхозра 686 гектар вырса, 435 гектар çинчен кĕлтесене кĕртсе капана хывнă. «Искра» тата «Ударник» колхозсем кĕрхи тырăсене капана хывнă хыççăнах çурхи тырăсене итем çине кĕртме пуçланă.

Ĕçе большевикла хăвăртлăхпа, вăрçă чухнехи услови ытларах пек туса пыракан колхозсем республикăра сахал мар. Колхозниксем ĕç çине социализмла пăхнин образецĕсене кăтартрĕç, палăртса хунă нормăсене икĕ-виçĕ хут ӳстерсе тултараççĕ. Элĕк районĕнчи Малти Хирлеп колхозĕ çурхи тырăсен 80 процентне вырса пуçтарнă, кĕлте кĕртнисине 70 процент тултарнă. Капана хывнă тырпуланран 60 процентне çапса пуçтарнă. Тури Вылăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çурхи тырăсене паян-ырансенчех вырса пĕтереççĕ. Пăрça йышши культурăсене çулса кĕнĕ хыççăнах çапса хунă. Пиллĕк молотилкăпа авăн çапаççĕ. Шупашкар районĕнче те вырса пĕтернĕ колхозсен йышĕ ӳссе пырать. Хăшпĕр колхозсем çĕрле те авăн çапаççĕ. «Молния» колхоз 100 гектар çинчен кĕртнĕ тырпула йăлтах çапса пĕтернĕ.

Пирĕн ăнса пулнă тырпула татах та кĕскерех сроксенче пухса кĕртме майсем пур. Колхозниксен ĕçлес кăмăл тысăк. Вĕсем хальхи вăхăтри, отечественнăй аслă вăрçăн хăрушă кунĕсенчи ĕç условийĕсене шута илсе, тырпула вăхăтра вырса пуçтарассишĕн ăна мар, ăна хăвăртрах çапса пĕтерессишĕн те çине тăрса кĕрешеççĕ.

Пирĕн республикăра уй ĕçĕсем пуçланни виçĕ эрне иртрĕ. Малта пыракан районсем çурхи тырăсене вырса пĕтересси патне сывхăрса пыраççĕ. Çĕрпӳ, Келинински, Чкаловски районсем тырă вырса пĕтереççĕ. Çак районсенче вырнă тырпула капана хывас тата авăн çапас ĕçсене халĕ те тивĕçлипе организацилемен-ха. Красноармейски районра кĕлтесене капана хывасси тата авăн çапасси юлса тырать. Çăлтава кунта туртăм вăйĕ çитменнине çине пăвантарма пăхни те сисĕнет. Анчах, çăлтавĕ туртăм вăйĕ çитменнинче мар. Вĕсем пур пек туртăм вăйĕпе те тулли усă курмаççĕ-ха. Кĕлтесене капана хывас ĕç юлса пынин тĕп çăлтавĕ—ĕçре черетлĕх пулнинче. Тырă вырма тухсанах кĕлте кĕртес ĕçе организацилемен, çавна пула халĕ хăшпĕр колхозсенче авăн çапма та пуçăнман. Çавăнтан ĕнтĕ Красноармейски районĕнчи организацисен, уйрăмăнах çĕрĕç работникĕсен хăйсене валли тивĕçлĕ вывод тумалла. Тырă вырас, кĕлте кĕртес, авăн çапас тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕçсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Пĕр ĕçе малтан туса теприне кайри плана хăвармалла мар. Пур ĕç те пĕр вăхăтра пулса пыни кирлĕ. Çапла ĕçлесен çеç эпир уй ĕçĕсене ăнăçлăн туса иртеретпĕр.

Колхозсен халь çурхи тырăсене вырнă хушăрах авăн çапас ĕçе туса пымалла. Лашапа ĕçлекен тата машинно-тракторнăй станцисен молотилкисемпе талăкне 20 сехет хушши ĕçлемелле. Çавăнпа пĕрлех тăпачпа авăн çапассине те анлăн туса пырас пулать. Кĕлте кĕртме уйăрнă лашасемпе урăх ĕçре усă курма пачах чармалла, вĕсемпе иртен пуçласа кăсченех кĕлте кĕртес пулать. Хăшпĕр колхозсен уйĕсем ялтан 3—4 çухрăмра пулаççĕ е тата кĕлтене çырма урлă турттарма тивет. Çакă вăл вăхăта нумай иртторет. Çавăн пек колхозсен уйрах итем туса авăн çапассине организацилес пулать. Çапла туни вăл хаклă вăхăта перекотлеме пулăшать.

Кĕлте кĕртнĕ çĕрте бестаркăсемпе тата рыдвансемпе ытларах усă курма тăрăшмалла. Мĕншĕн тесен кĕлтесене рыдвансемпе турттарни ĕç тухăçлăхне икĕ хут ытла ӳстерет. Кашни колхозăн халь вырса пуçтарнă тырпула хăвăртрах капана хывса, авăн çапас ĕçсене вăйлатса пыни кирлĕ. Тырпула мĕн чухлĕ маларах пухса кĕртетпĕр, тăкаланчăк та çавăн чухлĕ сахалрах пулать. Çанталăк халĕ пире усăллă тăрать. Çавна май, малта пыракан колхозсенче уйăх çутипе те авăн çапаççĕ.

Колхозсен пухса кĕртнĕ тырпула вут-кăвартан сыхлас тĕллĕпе те вăйлăн ĕçлемелле. Ку ĕçе пур колхозсенче те тимлĕн йĕркелени кирлĕ. Уйсенче, итемсенче пушартан сыхланмалли мероприятисене пĕтĕмпех шăхăнса тăмалла.

СОВЕТ ХАЛĂХНЕ САЛАМЛАНИ

Славянсен ирĕклĕхĕн чрезвычайнăй комитечĕ Лондонран СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательĕ М. И. Калинин юлташ ячĕпе çакăн пек телеграмма янă:

«Славянствăн тата тĕнчери демократиллĕ халăхсен чи усал тăшманне — фашизма хирĕç кĕрешсе пыракан Совет Союзĕн Правительствине тата халăхĕсене пирĕнтен тăванла салам калама пултăпăр Сиртен. Сирĕн çулпуçăр историллĕ чĕнсе каланипе, фашистла агрессине хирĕç кĕрешме чăннипе эпир питех те хавасланатпăр. Хĕрлĕ Çар фашистла бандитсене çĕмĕрсе тăкса çĕнтересси тата Гитлерăн чуралăха кĕртсе ӳкернĕ çĕршывсенчи тиранине пĕтересси эпир шанса тăратпăр. Болгари тата Югослави халăхĕсем хăйсем никама та пăхăнса тăрас марришĕн хăюллăн кĕрешессине эпир çавăн пекех шанса тăратпăр.

Борис Михайлович Булгаков, Петр Турич, Фред Франтич—Югославия. Георг Рейзер — Хорватия, Петер Резнич, Петер Виприч — Черногория. Стоил Баталов—Болгария».

* * *

Калинин юлташ славянсен ирĕклĕхĕн чрезвычайнăй комитетне çакăн пек телеграмма янă:

«Совет Союзĕн халăхĕсене Эпир тăванла саламланăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн ячĕпе тата мĕнпур совет халăхĕсенчен пĕтĕм чĕререн тавтăватăп. Германи фашизмне çĕмĕрсе тăкса çĕнтересси мĕнпур славян халăхĕсенчен, çавăн пекех Европа тулашĕнчи славянсенчен те калама çук пысăк вăй хума ыйтать».

Германия Турци çине тапăнма хатĕрленет

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америкăн радио-комментаторĕ Обронский Анкарара радио тăрăх сăмах тухса каланă чухне Турци чиккине Германи, Итали тата Болгари войскисене нумай илсе пырса тăратни çинчен пĕлтеонĕ. Обронский çапла каланă: нимĕçсем Турцине хирĕç атака тăвасси пурпĕрех пулмалла, текен хыпарсем нумай çуреççĕ, тенĕ.

Германире вăрçа хирĕçле демонстрацисем пулнă

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС) Оверсис ньюс агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: ĕç çинчен лайăх пĕлсе тăракан çынсем калаçă тăрăх, нумаях та пулмасть темиçе пин хĕрарăм Берлинран хĕвелтухăç фронтне каякан çар поездне тытса чарнă. Хĕрарăмсем хăйсене пулеметсенчен персе вĕлересснипе хăратнă хыççăн çеç саланнă. Çапла пĕлтереççĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçа хирĕçле демонстрацисем Германире час-часах пулса иртнинне пула, верховнăй командовани Германи салтакĕсене хĕвелтухăçĕнчи фронтран киле çырусем çырма чарнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Сентябрĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсенче унăн 30 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 27 самолет пĕтнĕ.

* * *

Совет летчикĕсем Ленинград çывăхĕнчи тăшман авиацине халĕ те ăнăçлăн çĕмĕрсе пыраççĕ. Пĕлĕтлĕ кун пулнипе усă курса, противникăн 70 яхăн самолечĕ пысăк аэродром çине вĕрсе пынă. Тăшмана пирĕн истребительсен группи кĕтсе илнĕ. Сывлăшра çапăçу пуçланса кайнă, çав çапăçура фашистсен 11 самолетне персе ӳкернĕ. Çак çапăçура старший лейтенант Лазарев юлташ пысăк мастерлăх тата паттăрлăх кăтартнă. Тăшман самолечĕсен группине хăюллăн атакăласа, вăл «Юнкерс-87» йышши 5 самолета пĕтерсе тăкнă. Кĕçĕн лейтенант Новиков «Юнкерс-87» йышши икĕ самолета тата пĕр «Мессершмитта» персе ӳкернĕ. Тепĕр кунне пирĕн летчиксем, противникăн çĕр çинчи войскисене 50—100 метр çӳллĕнчен штурмласа, нимĕçсен 10 танкне, 20 автомашинине тата нумай лавĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн разведка фронт патне шоссе тăрăх фашистсен мотоколонни пыни çинчен пĕлтернĕ. Старший лейтенант Поликарпов, сержант Мотыгин тата красноармеец Кочетков гранатăсен сыххисемпе хĕçпăшалланса, тăшман орудисемпе минометсенчен персе тăнă пулин те, шурлăх урлă каçса шоссе патне тухнă та, çул сывăхĕнчи канавра пытанса выртнă. Часах çул çинче нимĕçсен танкĕсем курăннă. Малта пыракан машина 15 метра çити сывхарсан, канавран танксен гусеницисем айне гранатăсен сыххисем ывтăнма тытăннă. Икĕ танкĕ чарăнса тăнă. Гранатăсен пĕр сыххи лекнипе горючи тултарнă автоцистерна çунма пуçланă. Чарăнса тăнă колонна çине пирĕн артиллери пеме тытăннă. Тăшман машинисене сапаласа янă.

* * *

Нимĕçсен фронт патне пыракан чăсĕсене çĕмĕрсе тăкма Д. районне майор Нестеровăн авиачăсĕ вĕрсе кайнă. Совет штурмовикĕсем çĕр çумĕпе вĕрсе пырса нимĕçсен 5—6 километр хушши тăсăлса пыракан войскисен колоннине атакăланă. Нимĕçсем атакăна хатĕрленессине пĕтерсе лартнă. Пирĕн авиаци нимĕçсен салтакĕсене 700 çын ытла, 80 автомашина, 12 оруди, 6 зенитнăй установка тата темиçе танк пĕтерсе тăкнă. Колоннăна сапаласа янă хыççăн сывлăшра нимĕçсен истребителĕсем курăннă. «Мессершмиттсем» совет штурмовикĕсен лейтенант Копылов ертсе пыракан звени çине тапăннă, анчах çӳлтен нимĕçсем çине совет истребителĕсем вăркăнса пынă. Икĕ «Мессершмитта» çухатса, Германи летчикĕсем каялла тарнă.

* * *

ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссарĕ «Çапăçура лайăх ĕçленĕ»чĕн çар санитарĕсемпе носильщикĕсене правительство наградине пама тăратмалли йĕрке çинчен» каларнă приказ медицина работникĕсене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарчĕ. Фронтăн пур участокĕсенчен те медицина сестрисен, военнăй фельдшерсен тата санитарсен паттăр ĕçĕсем çинчен пĕлтереççĕ. Хĕвеланăç енче кĕрешекен пирĕн батальонсенчен пĕрин саперĕсем юханшыв урлă каçма кĕпер хатĕрленĕ. Понтоннăй кĕпере туса ситерсен, противник артиллерипе пеме тытăннă. Тăшман снарячĕсен ванчăкĕсем пырса тивнипе, пиллĕк красноармеец-сапер аманнă пулнă. Аманнă саперсене пулăшма çийĕнчех медицина сестри Вера Никитина тата военнăй фельдшер Куделин пырса çитнĕ. Пулеметсемпе артиллерипен персе тăнă пулин те, вĕсем аманнă красноармеецсене илсе тухса курăнмалла мар çĕре вырнаçтарнă, унта вĕсен сураннe сыхса янă. Аманнă кĕçĕн командир шыва ӳкнĕ. Медицинăн хăюллă сестри шыва кĕрсе кайнă та командира çăлса хăварнă. Кĕпершĕн пынă çапăçура Никитина тата Куделин юлташсем 31 аманнă боецпа командира тата вĕсен хĕçпăшалĕсене çăлса хăварнă.

Çурçĕр флотĕнчи медицинăпа санитари отрячĕн старший военнăй фельдшерĕ Лилишенцев юлташ тата военнăй фельдшер Комаров юлташ, противник персе тăнине пăхмасăр, çапăçу хирĕнчен аманнисене хăрушлăхран хăрамасăр иле-иле тухса, вĕсене малтанхи пулăшăва параççĕ. Вĕсем çапăçу хирĕнче нумай хĕçпăшалсем пухса вĕсене командованине пырса панă. Çак кунсенче аманнисене илсе каймалли пункта пынă санитарнăй сулă çине тăшман самолечĕсем бомба пăрахнă. Военнăй фельдшера Храмцова юлташа бомба ванчăкĕ тивсе амантнă. Хăй аманнă пулин те, Храмцова юлташ аманнă красноармеецсене шлюпка çине хурса, çыран хĕрринчен санитарнăй сулă патне илсе кайнă, вĕсене хăюллăн çăлса хăварнă. Старший сержанта, санитара Дынул юлташа оборона линийĕнчен 300 метрта аманнă пулеметчик выртни çинчен пĕлтернĕ. Тăшман вăйлăн персе тăнине пăхмасăр, Дынул юлташ аманнă боец патне шуса пырса ăна пулăшу панă, вара медицина пунктне илсе кайнă.

* * *

Мешхедран тавăрăннă темĕнле юмахри çулçӳревçĕ каласа панипе усă курса, Ассошиэйтед пресс агентствин Тегеранри корреспонденчĕ çапла пĕлтерĕ: турра ĕненекен мусульмансем çул тăрăх пынă чухне вĕсем çине Совет самолечĕсем пулеметсенчен пенĕ, çакă вăл Иран правительстви хирĕç тăма чарăнасси çинчен распоряжени панă хыççăн пулнă, тенĕ. Ассошиэйтед пресс агентствин Тегеранри корреспонденчĕн çак пĕлтерĕвĕ ăссăр-тата сахалтан та тĕлĕнмелле пĕлтерӳ пулса тăрать.

Совет войскисем Иранра куçса пынă чухне те тата вăрçă ĕçĕсене чарса лартнă хыççăн та, турра ĕненекен нимĕнле мусульмансем çине те е ытти мирлĕ халăх çине те совет самолечĕсем темен. Совет летчикĕсем, гитлерла бандитсем пек, мирлĕ халăхпа вăрçмаççĕ, çакă ĕнтĕ пуриншĕн те палă.

Ассошиэйтед пресс агентствин Тегеранри корреспонденчĕ темĕнле «çулçӳревçĕн» — Гитлер агенчĕ тата шпионĕ пулса тăраканскерĕн провокацине лекнĕ жертва пулнă пирки шеллесси кăна юлать.

* * *

Фашистсен войскисем хĕвелтухăç фронтĕнче чĕрĕ вăй тĕлĕшпе питех те пысăк çухатусем тăваççĕ. Генерал Зикст фон-Арним нимĕçсен 95-мĕш пехотнăй дивизине пана приказра çапла çырать: «Юлашки эрнесенче тунă çухатусене пула, пехотнăй полксен боевой составĕ питех те чакрĕ, çавăн пирки подразделенисем нумайĕшĕ çав тери вăйсăр тата вĕсемпе вăрçă ĕçĕсенче тивĕçлипе усă курма май çук. Офицерсен составĕн çухатăвĕсем уйрăмăнах çивĕччĕн сисĕнеççĕ. Пополнени киличчен вăхăтлăха темиçе подразделенирен пĕр подразделени тума кирлĕ. Пополнени сентябрĕн 15-мĕшчен пулаймасть пулĕ-ха». Нимĕçсен тепĕр пехотнăй дивизийĕн, хĕвеланăç енче çĕмĕрсе тăкнăскерĕн, командирĕ фронт штабне çапла пĕлтерет: «Дивизире офицерсем 80 çынран ытла мар юлчĕç. Пĕр офицерăр тăрса юлнă ротăсем те пур. Çывăх куншенчех çĕнĕ офицерсем килмесен, дисциплина пĕтĕмпех пăсăлса каять, вара салтаксем пăхăнма пăрахаççĕ. Дивизин личнăй составĕ ывăннине тата çĕнĕ подкрепленисем кирлине шута илсе, дивизине кантарма тата ăна йĕркелеме пĕр вăхăтлăха тыла илсе кайма ыйтатăп...»

Нимĕçсен 253-мĕш стрелковăй дивизийĕн командирĕ дивизин чăсĕсене килнĕ резервистсемпе хăй кăмăлăр пулнине палăртать. Вăл çырса кăтартнă тăрăх, резервистсем нумайĕшĕ — «вĕренсе çитмен, çаврăнăçусăр тата кăнтăм салтаксем. Вĕсем кучухнехи вăрçăн принципĕсене питех те начар пĕлеççĕ, автоматлă пăшалсемпе усă курма пĕлмеççĕ тата наступлени çинчен мар, хăйсен пурнăçне сыхласа хăварасси çинчен нумайрах шутлаççĕ. Çакăн пек салтаксем 4 пин пулнă пирки, эпĕ хамăн дивизне çапăçма пурнăçлă те пултаракан дивизи тесе шутлама пултараймастăп...»

Республикăри уйхирсенче

ÇЕРПУ. Районри колхозсем кĕрхи тырăсене вырса пĕтерчĕç. Халĕ çуртырри выраççĕ. Паянхи куна 8355 гектар вырса пуçтарнă. «Красная Чувашия», «КИМ», Клим Ворошилов, Жданов ячĕпе тăракан колхозсем çуртырри вырса пĕтерчĕç. Тырă вырнă хушăрах чылай колхозсем кĕлте кĕртеççĕ, авăн çапаççĕ. Сентябрĕн 2-мĕш тĕлне 6787 гектар çинчи ыраш кĕлтисене турттарса капана хывнă. 4072 гектар çинчи кĕлтесене çаннă. «Ударник», «Новая жизнь», «Красный Перекоп» тата ытти колхозсем те кĕрхи çĕртме тума тытăнчĕç.

Г. ПЕТРОВ.

ЭЛĔК, сентябрĕн 3-мĕш. (Телефон тăрăх). Иртнĕ пиллĕк кун хушшинче 2 350 гектар çинчен кĕлтесене итем çине кĕртсе капана хывнă. Малти Хирлеп колхозĕ çурхи тырăсен 80 процентне вырса пĕтернĕ. Çак колхозра авăн çапас ĕç те ăнăçлăн пырать. Капана хывнă тырпулсенчен 60 процентне çапса пуçтарнă. Государствăна тĕшти тырă парса татнă, халĕ вĕсем натурооплата лессе параççĕ. Тури Вылăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз та уй ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе пырать. Ыраш кĕлтисене капана хывса пĕтереççĕ. Пăрça йышши культурăсене пĕтĕмпех çапса пуçтарнă. Колхоз итемĕсем çинче 5 молотилка лартнă, вĕсем иртен пуçласа кăсченех ĕçлеççĕ. Йĕтĕппе пуса сӳсне государствăна парса татнă.

И. ИВАНОВ.

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Сентябрĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Сентябрĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи саперăй подразделенисенчен пĕрин кĕçĕн лейтенанчĕ Цепляев юлташ Н. юханшывĕ урлă хывнă кĕпер çине минăсем лартса тухнă. Кĕпер патне часах тăшман мотоколонни пырса çитнĕ. Цепляев юлташ 5 танкпа темиçе мотоцикла кĕпер урлă каçарса янă, унтан кĕпере взрыв туса аркатса тăкнă. Тăшманăн пĕр танкĕпе икĕ мотоциклисĕн кĕперне пĕрлех сывлăша сирпĕнсе кайнă. Городецкий юлташăн подразделенийĕ нимĕçсен кĕпер урлă каçма ĕлкĕрнĕ 5 танкĕпе 13 мотоциклистне пĕтерсе тăкнă. Çав кунах Цепляев юлташ кĕçĕн сержантпа Смирнов юлташпа пĕрле татах тепĕр кĕпер çине минăсем лартса тухнă, пирĕн çырана фашистсен 15 танкĕ каçнă хыççăн çав кĕпере взрыв туса сирпĕтсе янă. Хăйсен пехотинчен татса илнĕ фашистла танксене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Юлашки икĕ кун хушшинче Хура тинĕс флотĕнчи авиаци бомбардировщикĕсем противника хирĕç пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсен 50 пытла танкĕсемпе автомашинисене, «Мессершмитт» йышши 4 самолета тата фашистсен пит нумай пехотине, утлă çарне тата артиллерине пĕтерсе тăкнă. Çак çапăçусенче летчиксен — старший лейтенант Лобозовăн тата лейтенант Макаровăн экипажĕсем уйрăмах палăрса тăнă. Хура тинĕс флотĕнчи Н-ски полкăн тинĕсри пехота батальонĕ пĕр кун хушшинче противникăн 4 танкне пĕтерсе тăкнă тата Румыни кавалерийĕн эскадронне тытăна илнĕ.

* * *

Пирĕн икĕ подразделенин флангĕсем хушшине кĕрсе кайнă нимĕçсен пысăк группи çĕрле Морозов капитанăн батальон штабне йĕри-тавра хупăрласа илме хăтланнă. Штаб патĕнче пулнă боецсемпе командирсем фашистсене хăюллăн атакăланă. Çак атакăна нимĕçсем чăтса тăма пултарайман. Вĕсенчен нумайĕшĕ тытăна парăннă, ытти сем каялла тарнă. Çапăçу хирне противникăн темиçе вуншар çын вилсе тата аманса выртса юлнă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче — 5 ручной пулемет, 2 автомат, вуншар винтовка, радиостанци пур.

* * *

Старший лейтенант Ленский боецсен группине противник тылне ертсе кайнă. Совет разведчисем тăшманăн икĕ станковăй пулеметне, противотанковăй тупине тата 40 фашиста яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи Люблински ялсоветне кĕрекен Горки ялĕ çине фашистсен 7 бомбардировщикĕ вĕçсе пынă. Урамра колхозниксен ачисем выляса çӳренĕ. Нимĕçсен бомбардировщикĕсем çĕр çумне аялтан вĕçсе пырса ачасем çине пулеметсенчен пеме тытăннă. Пӳртсенчен хăйсен ачисем патне амăшĕсем чупса тухсан, фашистсен летчикĕсем пикировка туса бомбăсем пăрахма тапратнă. 6 ачана тата 8 хĕрарăма вĕлернĕ. Сакăр ачана йывăр амантнă.

* * *

Фронтăн хĕвеланăç енче противник тылĕнче Орехов юлташ командир пулса ертсе пынипе кĕрешекен партизансен отрядĕнчи боецсем темиçе кун хушши сăнаса пурăннă хыççăн, Подворица ялĕ патĕнчи вăрманта пысăк уçланкăна нимĕçсен транспортлă самолечĕсем кашни кунах ака-ана ларнине асăрханă. Разведчиксем çĕрле вăрман чăтлăхне шăппăн пынă та, ăстан пытанса ларнă. Ирхине вĕсем уçланкăна фашистсен самолечĕ анса ларнине курнă. Çав вăхăтрах самолет патне автоцистерна пырса çитнĕ, самолетпа илсе килнĕ бензина çав автоцистерна çине пуштатнă. Кун каçичен татах темиçе самолет бензин илсе пырса анса ларнă. Каç пулса çитеки разведчиксем хăйсен отрядне тавăрăннă та, мĕн курни-илтни çинчен каласа панă. Тепĕр икĕ кунран отряд çав аэродром патне систермесĕр пырса çитнĕ. Хирте ларакан пĕр самолетпа автоцистернăсем çине тата вăрмах хĕрринче çĕр айĕнче тунă пысăк мар бензинохранилище çине партизансем гранатăсем тата горючи тултарнă бутылкăсем ывăтнă. Самолета тата авиаци бензинĕн пĕтĕм запасне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсемпе партизансем пĕр-пĕрин çине персе тăнă вăхăтра нимĕçсен 28 салтакне вĕлернĕ тата амантнă.

Витебск облаçĕнчи Переволочная ялĕ патĕнче партизансем продовольстви тиенĕ утлă пысăк обоз çине хăюллăн тапăннă. Нимĕçсен обозĕ пыракан çула картласа лартнă та, партизансем повозкăсем çине пеме пуçланă. Ерĕхсе кайнă лашасем, ураписене çĕмĕрсе, вăрмана тапса сикнĕ. Партизансем консервăсем тултарнă нумай ешĕксене, виçĕ ручной пулемет тата 5 автомат тытса илнĕ.

Ленинград облаçĕнчи Торошино станцийĕ патĕнче Н. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ бронированнăй дрезинăпа рельсăран кăларса янă, çав дрезинăпа немĕç офицерĕсен группи Пскова кайнă пулнă. Пиллĕк офицер тата тăватă салтак вилнĕ. Фашистсен крушени пулнă вырăна пырса çитнĕ утлă разъезчĕ çине те тапăннă. 7 кавалеристран пĕри çеç çăлăнса юлнă. Çав кунах отряд Струги Красные станцийĕ патĕнче противник автомашинисем çине тапăннă. Патронсем тиенĕ 7 грузовика тата танксем валли горючи тултарнă пĕр автоцистернăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Киеври ĕççыннисем геройла ĕçлесе фашистсен йыткĕтĕвĕсене çапса аркатас ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Киеври мĕнпур заводсемпе фабрикăсенче фронт заказĕсене срокчен тата нирттерсе пурнăçа кĕртеççĕ. Чугунçул çинче ĕçлекен патриотсем хăйсен вырăнĕсенче хăюллăн та паттăрăн тăраççĕ. Украина столици сывăхĕнчи Д. станцийĕ çине фашистсен самолечĕсем тапăннă. Станци начальникĕ Дремачев юлташ, станци дежурнăйĕ Коняев юлташ, сигналист Филипенко юлташ, хăйсем вилессинчен хăрамасăрах, горючи тиенĕ поезда перегона хăвăрт илсе тухнă. Составительсем Таровпа Раскалей станцинче тăнă эшелонсене вĕçертсе янă. Грузсене çăлса хăварнă.

Киеври ученăйсем хăйсене шеллемесĕр паттăрăн ĕçлеççĕ. УССР Наукăсен Академийĕн институчĕсем çĕршывăн çар хăватне тĕреклетмелли чылай хаклă сĕнӳсем панă. Клиникăллă физиологи институтĕнчи научнăй работниксем госпитальсене активлăн пулăшаççĕ. Киевра пурнăç туллин тапса тăрать. Хулара ĕç пĕтнĕ хыççăн ĕççыннисем çар ĕçне вĕренеççĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

П. И. Калинкина юлташа Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен

Прасковья Ивановна **Калинкина** юлташа Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председательĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн обязанноçĕсене туса пыракан А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули,
1941 çулти сентябрĕн 4-мĕш.

Рейтер агентстви авиаци çухатăвĕсем çинчен

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви, лайăх пĕлсе тăракан çынсем пĕлтернисем çине кăтартса, çапла çырать: вăрçăн икĕ çулĕ хушшинче Англи истребительĕсемпе зенитнăй артиллери противникăнне 4.500 самолетран сахал мар персе ӳкернĕ.

Англи авиацийĕ 1.400 самолет çухатнă, анчах 470 ытларах самолетăн летчикĕсем çăлăнса юлнă.

Де Бриньон пичет представителĕсене пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Ваширен пĕлтернĕ тăрăх, де Бриньон пичет представителĕсене çапла каланă: Франци Германипе тата Италипе татăклă мир тăвас пирки калаçусем пуçлама хăтланать, тенĕ.

Гитлер агенчĕсем Иранра тунă ирсĕр провокаци

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Августăн 30-мĕшĕнче 10 сехет те 20 минутăра Тегеран çине хĕтмен çĕртенех сывлăшран бомбăсем пăрахнă, бомбăсем пăрахасси 11 сехетченех пынă. Халĕ паллă пулнă тăрăх, бомбăсене Иранăн темиçе çамрăк офицерĕ-летчикĕсем пăрахнă. Кун умĕн çапăн пек ĕç пулса иртнĕ: Иран авиацийĕн начальникĕ самолетсене ангарсене кĕртсе лартма тата летчиксене казармăсене пухма распоряжени панă. Анчах та, Иранăн темиçе офицерĕ-летчикĕсем: эпир приказа пăхăнмастпăр тата Англипе Совет Союзăн чăсĕсене хирĕç çапăçатпăр, Тегеран çине бомбăсем пăрахатпăр, тесе каланă. Çак офицерсем хăйсем мĕн тума шутланине совет войскисемпе Англи войскисем малалла кăусса пынине хирĕç тăма чарса лартасси çинчен Иран правительстви йышăннă решенипе килĕшместпĕр текен сăлтавпа ăнлантарса панă. Иранăн çак офицерĕ-летчикĕсем, Иран правительствин решенине пăхăнмасăр, августăн 31-мĕшĕнче, ирхине, Тегеран çине çĕнĕрен вĕçсе пырса хула çине бомбăсем пăрахнă. Çапла çирĕплетсе калама пур сăлтавсем те пур: çакăнта асăннă Иран летчикĕсем Тегеран çине бомбăсем пăрахассине Иранра преступленилле йăвa çавăрнă тата Иран офицерĕсен хăшпĕр пайне хăйсем майлă çавăрнă, немĕç фашисчĕсем тăрех хĕтĕртнĕ тăрăх пуннă.

Германири информаци бюровĕ Тегеран çине совет самолечĕсем бомбăсем пăрахнă тесе провокацилле çӳлĕлтетни никама та улталама пултарайманть, мĕншĕн тесен, Иран летчикĕсем приказа пăхăнмасăр сывлăша хăпарса хула çине бомбăсем пăрахнă факта Иранăн çар министрĕ августăн 30-мĕшĕнчех çирĕплетсе панă. Тегеран çине бомбăсем пăрахса паллă мар еннелле тарнă Иран летчикĕсене шыраса туписа наказани парас пирки Иран влачĕсем мĕнле те пулсан мерăсем йышăннине йышăнманни халĕ те паллă маррине палăртас пулать.

Диксон заявленийĕ

ЭДИНГУРГ, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Англири тред-юнионсен советĕн председателĕ Диксон ĕнер ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ: «Англири тред-юнионсен халь пулса иртекен конгресĕ Англири рабочи класс ССР Союзне кирек-мĕнле материаллă пулăшу пама та татăклăн хатĕр тăнине кăтартса панă, çавăнпа та вăл хăйĕн мĕнпур вăйне хурса тăрăшма хатĕр. Августăн 31-мĕшĕнче конгресс ĕçлеме пуçличчен пулса иртнĕ ларурра та, çавăн пекех тата конгресра та эпĕ ССР Союзĕ çинчен, Хĕрлĕ Çăран паттăр ĕçĕсем тата вырăс халăхĕ хирĕç тăрса кĕрешни çинчен асăнсан, мана ăшшăн саламласа кĕтсе илчĕç. Фашистла захватчика отпор парас ĕçре эпир вырăс халăхĕпе пĕр шухăшлă пулса кĕрешетпĕр, тата ăна татăклăнах пĕтерсе тăкиччен кĕрешме чарăнмăпăр. Профсоюзсен Англипе Совет Союзĕ хушшинче пĕрле тунă комитечĕ май пур таран сывăх вăхăтрах ĕçлеме пуçлассине тата Россия нушисене тăрех пырса тивекен кирлĕ мероприятисене туса хатĕрлеме пулăшассине эпир шансах тăратпăр».

Испани халăхĕ Совет Союзĕ майлă тăрать

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Испани республиканецĕсен Мексикора эрнере пĕрре тухса тăракан «Эспания популар» ятлă хаçачĕ августăн 14-мĕшĕнчи номерĕнче çапла çырать: Испанире ĕлнĕ çырусем тăрăх, Гитлер Совет Союзĕ çине тапăнăшăн Испани халăхĕ тарăхса кайнă.

Правительство совет фронтне ăсатма доброволецсене пухма тытăннă хыççăн, антифашистсем июль уйăхĕнче Сан Лука да Барато портĕнчи çар сооруженисене взрыв туса çĕмĕрсе тăкнă. Çавăн пекех тар складне те взрыв туса çĕмĕрнĕ, унта артиллери орудийĕсем нумай пулнă. Çакăн пекех саботаж туса Барселонăри пысăк лабораторине çĕмĕрнĕ.

Фашистсем доброволецсене пысăк шалу тӳлеме тата продовольстви пекне ӳстерме сăмах панă пулсан та, Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа валли «доброволецсем» пухас тĕлĕшпе пыракан кампани арканса кайнă. Хăшпĕр испанецсем, малашне дезертирсем пулса, Хĕрлĕ Çар енне тарса каяс тесе, юриех «доброволецсем» пулма çырăннă. Ытти сене «доброволецсен» шутне ирĕксĕрлесе çырăнтарнă. Хăшĕсене тӳрех вăйпа çырăнтарнă. Галицире пурăнакансем, уйрăмах çамрăксем, хăйсем Совет Союзĕ çĕнтерессишĕн тăнине татăклăнах каласа параççĕ. Нумай çамрăксем, вĕсене правительство совета хирĕçле легиона кĕме ирĕксĕрлес пулсан, хăйсем тусем хушшине тарасси çинчен пĕлтереççĕ. Галисири хуласемпе ялсенче, уйрăмах Карун районĕнче, «Россия сывă пултăр!» тесе çырнисем час-часах пулаççĕ.

Германири йывăр шухăш-кăмăлсем

ЦЮРИХ, сентябрĕн 2-мĕш. (ТАСС) Швейцарин Берлинран Цюриха тавăрăннă пысăк промышленникĕ çапла каласа парать: Германири промышленность çыннисен кăмăл-шухăшĕ йывăрланса çитнĕ. Совет Союзне çĕнтерессине никам та шанмасть. Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçă вăраха тăсăлса кайнă факта Германия поражени тӳсни пулать тесе хаклаççĕ.

Вилнисемпе аманнисен шучĕ питĕ пысăк пулни, медицина персоналĕпе медикаментсем çитмен пирки аманнисенчен 60 процентĕ вилни, Англипе Совет Союзĕн авиацийĕ Германи хулисем çине тăтăшах бомбăсем пырса пăрахни — çаксем пурте халăха калама çук йывăр шухăша яраççĕ. «Çаксем хăçан пĕтĕç-ши? 1918 çулхинчен те начар ан пултăрччĕ» — тенисене пур çĕрте те илтме пулать.

Шанчăка çухатни, канăссăрланса ӳкни тата йывăр шухăшсем кулленех ӳссе пыраççĕ. Гитлера курайманни тата вăл Германине катастрофа патне илсе пынине ăнланса çитни ӳссе пырать.

„Таймс“ хаçат Польша çинчен мĕн çырать

ЛОНДОН, сентябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи хаçачĕсем Гитлер Польша çине тапăнса кĕни икĕ çул тулнă май статьясем пичетлесе кăларнă.

«Таймс» хаçат çапла çырать: нацистла оккупантсен çарĕсем кун пек хăрушла çаратса пĕтернине тата пĕр хĕрхенмесĕр асаплантарнине пĕр çĕрпыв та Польша пек тӳссе курман. «Халăх-господин» текен вилĕмле теорие хаяррăн тата намăса çухатса кунти пек ниçта та пурнăçа кĕртсе пыман. Нацистсем пĕтĕм Польша халăхĕ çине кĕçĕн раса вырăнне хурса пăхаççĕ. Совет Союзĕ Польшăн хăватлă союзникĕ пулса тăрать, унăн пысăк ресурсĕсем тата кĕрешӳре хăватлăн тăни союзниксем çĕнтерессине, çавăнпа пĕрлех Польша ирĕке тухассине хăвăртлатĕç. Вăрçă пуçланни икĕ çул тултарас умĕнхи уйăхсем телейсĕр, анчах парăнман Польша халăхне хаваслантарчĕç тата малашлăха ĕненме шанчăк пачĕç.

Авструре пысăк восстани пулнă

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатăн корреспонденчĕ шанма тивĕçлĕ вырăнтан çапла пĕлтерет: нумай та пулмасть Линц хулинче (Тури Австрия) Германи Геринг концернĕн хурçă шăратакан пысăк заводĕнче пысăк восстани пулса иртнĕ. Рабочисем ĕç укçине ӳстерме тата ĕç условийĕсене лайăхлатма ыйтнă. Анчах та, вĕсен требованине йышăнман. Вара рабочисем, виçĕ домна кăмакине взрыв туса аркатма тесе темиçе çын хăварнă та, заводран тухса кайнă. Завода улнă рабочисем икĕ домна кăмакине аркатса тăкнă. Вырăнти охранăн штурмовой отрячĕсем полиципе пĕрле завода пырса, забастовка тăвакансем çине пеме тытăннă, забастовщиксем хирĕç персе ответленĕ. Хулара пурăнакан арçынсенчен нумайĕшĕ забастовщиксемпе пĕрлешсе кайнă. Урамсенче çапăçу пулса иртнĕ. Полици рабочисем тунă баррикадăсене штурмлама хăтланнă. Нумайĕшне вĕлернĕ. Полицине хирĕç тăнă çĕрле хăрăмсем те хутшăннă. Восстанине Венăран ятарласа чĕннĕ войскăсем пырса çитсен тин путарса лартнă.

Англи авиацийĕ Берлин тата Франкфурт çине пырса тапăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Берлин районĕнчи тата Хĕвеланăç Германири çар предприятийĕсене атакăланă.

Бомбăсем пăрахнă тĕп объектсем Берлин тата Франкфурт пулнă.

Франкфуртра чугунçул линийĕсемпе промышленность объекчĕсем çине бомбăсем питех те вăйлăн пăрахнă. Берлин çине пырса тапăннă çĕре чи пысăк бомбардировщиксем хутшăннă. Бомбăсем пăрахнă хыççăн Берлинра пысăк пушарсем тухнă. Промышленность предприятийĕсен çурчĕсем çине бомбăсем тĕл пырса ӳкнине палăртнă.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче—комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕ

Пурте воскреснике тухар!

Совет çамрăкĕсем, пĕтĕм халăхпа пĕрле, çĕршывăн оборона фондне тăвас ĕçре хастарлăн ĕçлеççĕ. Августăн 17-мĕшĕнче — комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕн кунĕнче — мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксем çĕнĕ стройкăсем патне, чугунçулпа пристань çине, колхоз уйĕсене ĕçлеме тухрĕç, тăван çĕршывăн оборона фондне тума пулăшрĕç. Вăл кун комсомолпа совет çамрăкĕсем большевикла партине, çулпуç аслă Сталина пĕтĕм чĕререн парăннине кăтартса пачĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксен малтанхи воскресникне Шупашкарта 5400 çын ытла хутшăннă. Ĕçлесе илнĕ 24 пин тенкĕ укçана оборона фондне панă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн решенийĕ тăрăх, Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери 27-мĕш кунне сентябрĕн 7-мĕшĕнче уявласа иртермелле тунă. Вăл кун демонстрацисемпе парадсем вырăнне комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш воскресникĕ пулать.

Комсомолăн хула комитечĕ ку ыйтăва бюрора сӳтсе-явăрĕ. Пуçламăш организацисене Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери Куне хатĕрленес ĕçе Сталин юлташăн июлĕн 3-мĕшĕнче тухса каланă сăмахне асра тытса туса пыма хушрĕ. Иртнĕ воскресникре пулнă йăнăшсене шута илсе, çитес воскресника тĕплĕн хатĕрленме кирлине палăртрĕ.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче производствăллă предприятисенчи, промартельсенчи, колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен вырăнĕнчех ĕçлеççĕ. Учрежденисенчи, шкулсенчи комсомолецсемпе çамрăксем вăрман касса хатĕрленĕ çĕрте, çул çинче, канализаци юсама тухаççĕ, пристаньре тата чугунçул çинче ĕçлеççĕ, Стройтреста пулăшаççĕ.

Вăтам шкулсенчи кĕçĕн классенче вĕренекенсем, учительсем, старший вожатăйсем, комсомолецсем ертсе пынипе, уйрăм бригадăсене уйăрăлса тимĕр-тăмăр, резина, эмел тумалли курăк, эмел ямалли пĕчĕк кĕленчесем пухма каяççĕ.

Шупашкар хулинчи комсомолецсем воскресниксене халиччен те ирттернĕ. Вĕсем ялапах хаваслă, организованно, тухăçлă иртнĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш воскресниксене организованно ирттерес тĕлĕшпе комсомол пуçламăш организацийĕсем ответлĕ. Вĕсен мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксем валли ĕçре кирлĕ инструментсене туписа хатĕрлес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Кашни станок хăйĕн мĕнпур пултарулăхĕпе ĕçлетĕр, кашни минута усăллă ирттĕр.

Комсомолецсемпе çамрăксем, хуть патриочĕсем! Сентябрĕн 7-мĕшĕнче, пĕр çын пек пулса, комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникне тухăр. Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери Куне ĕç фронтĕнчи çĕнĕ çĕнтерӳсемпе паллă тăвар!

А. ЭРРЭ.
ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри комсомолецсемпе комсомолкăсем, союза тăман çамрăксем тата учрежденисенче, предприятисенче ĕçлекенсем августăн 17-мĕшĕнче воскреснике активлăн хутшăнчĕç. Пуринчен ытла воскресник Калинин ячĕпе тăракан колхозра, Кивĕ Сĕнтĕрте, Çĕнĕ Măратра аван иртрĕ. Комсомолăн Александровка ялĕнчи организацин секретарĕ Пушкарева юлташ ертсе пынипе 109 çын иртен пуçласа кăçчен ĕçлесе 115 ĕçкунĕ тунă.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра районри служащисемпе рабочисем 75 çын ĕçлерĕç. Çамрăксемпе пĕрле ваттисем те хастарлă ĕçлерĕç. Исполком райсовечĕн секретарĕ Белкин, торготдел заведующийĕ Антонов юлташсем, 50 çултан иртнĕ пулсан та, нормăна 150-шар процент тултарчĕç.

Воскресник пуринчен ытла «Правда» колхозра организованно иртрĕ. Кунта Кивĕ Сĕнтĕрти кĕçĕн вăтам шкулта вĕренекен ачасемпе учительсем, вырăнти комсомолецсем 113 çын пулнă, вĕсем мĕнпурĕ 92 ĕçкунĕ тунă. Воскресник хыççăн та вĕренекен ачасемпе учительсем колхоз ĕçĕнче хастарлă ĕçлеççĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче Кивĕ Сĕнтĕрти туллимар вăтам шкулти комсомолецсемпе пионерсем 2.260 ĕçкунĕ тунă. Вĕсенчен учительница Родионова 78 ĕçкунĕ, учитель Тимофеев 50 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Комсомол комитечĕн секретарĕ Петр Яковлев ыран кĕлтине норма тăрăх 10 лав выраннă 20—25 лав кӳрсе пычĕ, учитель-комсомолец Артамонов юлташ 260 çурла шăлласа панă. IV-мĕш класра вĕренекен ача П. Тюльмаков кашни кунах 40-шер тĕм вырса пычĕ. Çакăн пек примерсене районри кашни колхозрах тĕл пулма пулать.

Воскресникре ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсене тивекен тыпрулпа уçăна оборона фондне хывнă. Халĕ сентябрĕн 7-мĕшĕнче пулакан воскреснике районри пур çамрăксем те, ваттисем те тухма хатĕр тăраççĕ. Воскресниксем туса иртерсе çĕршыв оборонин фондне вăйлатар, ирсĕр фашистсене хăвăртрах çапса çĕмĕрме пулăшар.

А. ПЕРЕПЕЛКИН.
ВКП(б) райкомĕн пропагандистĕ.

Пĕр колхозри комсомолецсем

— Малтан счетовод пулса ĕçленĕ юлташ фронта тухса кайрĕ. Мана ун вырăнĕнче ĕçлеме лартрĕç, — тет комсомолец Игнатьев юлташ.

Пысăк ĕç шанса панă ăна, çамрăкскерне. Анчах вăл учетпа отчет ĕçне лайăх туса пыма тăрăшать.

Вырăскас Пикшикри «Мотор» колхозри комсомол организацинче иртнĕ çулта 5 комсомолец çеç пулнă. Халĕ комсомолецсем 15 çынна çитнĕ. Комсомолецсем колхоз производствинче хастарлăх тата пултарулăх кăтартаççĕ. Мария Васильева — ача яслин заведующийĕ. Колхозниксем ир пуçласа каç пуличчен тырă вырнă, авăн çапнă çĕрте ирĕккĕн ĕçлеççĕ. Вĕсен ачисене комсомолка Мария лайăх пăхать.

Кашни комсомолеца ответлĕ ĕç панă, бригадăсем тăрăх çирĕплетсе тухнă. П. Харитонов, А. Иванова юлташсем ырăш вырнă чухне нормăна яланах 170—175 процент тултарса пынă. Комсомолецсем ытти колхозниксемпе пĕрле кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. П. Харитонов хальхи вăхăтра комбайн хыççăн тырă турттарса тăрать, А. Иванова — комбайн çапнă тырра сăвăрса тасатать.

Николаев, Павлов тата ытти комсомолецсем те уй ĕçĕсене активлăн хутшăнаççĕ. Хăшпĕр комсомолецсем трактор бригадисенче учетчик, весовщик пулса ĕçлеççĕ.

Колхозри комсомолецсем агитацилле-массăллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Вĕсем колхозниксене Хĕрлĕ Çар воинĕсен отечественнăй вăрçă фронтĕнчи паттăр ĕçĕсемпе, тылри ĕçсыннисен мухтавлă ĕçĕсемпе паллаштараççĕ. Кунпа пĕрлех хăйсем колхоз производствинче пысăк пултарулăх кăтартса, колхозниксене тата та лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Комсомолецсем бригадăсенче стена хаçачĕсем кăларма пулăшаççĕ.

Т. МАЙОРОВ.

Изобретательсемпе рационализаторсен йышне ӳстерер

Совет Союзĕнчи нумай миллионлă халăх юнлă фашизма хирĕç паттăрлăн кĕрешет. Тăван çĕршывăн мухтавлăлăхĕсем — Хĕрлĕ Çăран тата Тинĕс-Çар Флочĕн паттăр воинĕсем—фронтра гитлерла балдăсене хирĕç хăватлăн çапăçаççĕ. Тылри ĕçсыннисем тăшмана талăклă отпор пама, ăна тĕппипех çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара хастарлă ĕçпе пулăшаççĕ. Халĕ пĕтĕм çĕршыв хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ хушшинче пек урăхлатса çĕнетрĕ. Предприятисенче, учрежденисенче, фабрикăсемпе заводсенче ĕçлекенсем большевикла йĕркелĕх, организованность тăвассишĕн, ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешеççĕ. Пур çĕрте те ĕç вĕрет. Колхозсен уйĕсенче те, производствăра та нормăна икĕçĕршер процент тултарса ĕçлекенсен шучĕ йышланнăçемĕн йышланса пырать. Кашниех фронта валли ытларах продукци туса кăларма тăрăшать. Нумай рабочисем хăйсен специальноçĕсĕр пуçне урăх специальноçе вĕренеççĕ. Ку вара ĕç тухăçлăхне ӳстерме татах та пулăшать. Хăйсен станокĕсене лайăх вĕренсе ситеççĕ. Специалистсен, стахановецсен ĕçре производствăллă пуçарулăх сарăлсах пырать. Вĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе çĕнĕрен çĕнĕ майсем туртса кăлараççĕ, рационализаторла сĕнӳсем туртса илаççĕ.

Комсомолăн Мускав, Тула, Ленинград хулисенчи организацийĕсем рабочисем, техниксем, инженерсем хушшинче рационализаторла сĕнӳсем пухас ĕçе пуçарса янă. Нумай изобретательсемпе рационализаторсем хăйсен сĕнĕвĕсемшĕн тухăкан премисене оборона фондне параççĕ. Комсомол организацийĕсем, заводсенчи руководительсемпе пĕрле, рационализаторла сĕнӳсене пухма ятарласа бланка туса хатĕрленĕ. Халĕ вĕсем çав сĕнӳсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслеççĕ.

Мускав, Тула, Ленинград хулисенчи комсомолецсен паха пуçарăвне пуçарăнса, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ сентябрĕн 20-мĕш хушшинче рационализаторла сĕнӳсем пухас тĕлĕшпе икĕ-эрнелĕх туса иртерме йышăннă.

Пирĕн республикăри комсомол организацисен те çав икĕэрнелĕхе хутшăнмалла. Ĕç тухăçлăхне ӳстерме, нумайрах продукци туса кăларма пулăшакан рационализаторла сĕнӳсем ытларах пухма тăрăшмалла.

Улатăрти паровозсем юсакан, Канашри вагонсем юсакан заводсенче юлашки вăхăтра нормăна ытлашшипех тултаракансен йышĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Хăшпĕр стахановецсем сменăра яланах темиçешер норма тултараççĕ. Вĕсем производствăри çĕнĕ сăнсем, ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе техникăран, хăйсен станокĕсенчен мĕн пама пултарнине пурне те илекенскерсем.

Нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлекенсем нумайĕшĕ комсомолецсемпе çамрăксем. Вĕсем пулас изобретательсем, рационализаторсем, çавăнпа вĕсемпе куллен ĕçлени кирлĕ. Ку ĕçре комсомол организацийĕсен хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнас пулать. Чи малтанах рационализаторсен хушшинче комсомолецсем ытларах пулсан пит аван. Унтан ытти рабочисен техникăлă пуçарăвне аталантарса пырасси те комсомол организацин задачи пулса тăрать. Хăшпĕр рабочисем, техниксем, инженерсем панă рационализаторла сĕнӳсем хутсем ăшне путса юлаççĕ, ĕçре усă курмасăрах пĕтеççĕ. Сĕнӳсемпе усă курас ĕçре, уйрăмăнах халăхи вăхăтра, нимле бюрократизм та пулмалла мар. Комсомол организацисен рационализаторла сĕнӳсем мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслемелле. Усăллă сĕнӳсем паракансене хапăл туса йышăнмалла, вĕсене пур енĕпе те пулăшмалла, ĕçре хавхалантармалла. Вĕсен сĕнĕвĕсене çийĕнчех практикăллă ĕçре тĕрĕслесе пăхса, юрăхлă пулсан, усă курма пуçламалла.

Комсомолецсемпе çамрăксем, хăвăр ытларах рационализаторла сĕнӳсем пама тăрăшăр! Рабочисем хушшинче усăллă сĕнӳсене пухăр, вĕсемпе усă курма пулăшăр!

Е. ВАСИЛЬЕВА.

Çĕнĕ кĕнекесем

А. ГОЛУБЕВА. Уржум ачи. ЧАССР Государство издательстви. Шупашкар. 1941 ç. Тираж 3.000 экз. Хакĕ 3 тенкĕ.

«Уржум ачи» повеçре автор çулăмлă революционер Сергей Миронович Кировăн ача чухнехи шурнăçĕ çинчен тата унăн революциллĕ мировоззренийĕ мĕнле çирĕпленсе пыни çинчен каласа парать.

Повеçе туллимар вăтам тата вăтам шкулта вĕренекенсем валли çырнă пулин те, ăна ваттисем те пысăк интереспа вуласа тухаççĕ.

Л. Н. ТОЛСТОЙ. Хаджи Мурат. Чăвашгосиздат. 1941 ç. Тираж 3.000 экз. Хакĕ 3 т. 50 пус.

Кĕнекере Л. Н. Толстой 1851—1852 çулсенче Кавказра пурăнакан вак халăхсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн мĕнле кĕрешнине илсе кăтартнă.

УХСАЙ ЯККАВĔ. Ёмĕт. Роман. Пĕрремĕш кĕнеке. Чăвашгосиздат. 1941 çул. Тираж 35000 экз. Хакĕ 3 т. 50 п.

«Ёмĕт» романра Ухсай 1880 çулсенчи чăваш ялне, ялти тĕрлĕ сийсен представителĕсене (Хура Сухал кулак, чухăн хресчен Сунар Михалĕ, дьячок-учитель Ананий т. т. ыт.) кăтартса парать. Сунар Михалĕн ывăлĕ—Охотников Микихвор Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме каять, Ленин ашшĕне — Илья Николаевича курать, В. И. Ленинпа хăйĕнпе паллашать.

Чĕлхе тĕлĕшĕнчен хăшпĕр çитменлĕхсем сисĕнеççĕ пулин те, «Ёмĕт» романа, пĕтĕмĕшпе илсен, пысăк интереспа вулатăн.

ПВХО ĔÇНЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ПУЛĂШМА

Ыйтусем çине ответлетпĕр

Противогаз тăхăнса тренировкăсем иртнине мĕнле организацилемелле?

Час сӳрĕлмен отравляющи вещество сарăлсан, вăл нумай вăхăт хушши, тепĕр чухне эрне те, тытăнса тăма пултарать. Çавăнпа та ĕнтĕ кашни ĕçсыннин противогаз тăхăнса нумай вăхăт хушши ĕçлеме хăнăхса çитмелле, унăн сахалтан та пĕр таттисĕр 5—6 сехет таран противогазпа ĕçлеме пĕлес пулать.

Çакна тăвас тесен, малтанах тренировкăсем йĕркеллĕ ирттермелле. Ку ĕçе кашни предприятирех, колхозрах тата учрежденирех организацилеме пулать.

Противогаз тăхăнса нумай вăхăт хушши ĕçлес çĕрте çын тĕрĕс сывлама хăнăхни тĕп вырăн йышăнать. Çавăнпа та тренировка ĕçне çак енĕпе ытларах туса пыни кирлĕ.

Отравляющи вещество сарăлнипе пăсăлнă сывлăш противогаз коробки витĕр мĕн чухлĕ ерипен тата пĕр тикĕс кĕрет, пăсăлнă сывлăша тасатакан тата сыхлакан япаласем (поглотительсен сийĕсем) çавăн чухлĕ лайăхрах усă параççĕ. Çапла вара пĕр пек сывлама пĕлни тасалса çитнĕ сывлăша сывласа илме май парать.

Çын мĕн чухлĕ тарăнрах сывлать, маска ăшĕнчи пăсăлнă сывлăш çавăн чухлĕ хăвăртрах тухса каять.

Хăвăрт сывласан маска тасамар сывлăша пĕтĕмпех тасатса çитмест. Çавăнпа та çын часах сывлама пăшăлтатма пуçлать.

Противогаз тăхăнсан ерипен, пĕр пек тата тарăнăн сывламалла, сывласа сăмсапа сывласа илмелле. Тренировкăсем иртнĕ май, çын пĕр минута хушшинче 14—16 хут сывласа илме хăнăхса çитмелле, сывласа кăларасси те çавăн чухлех, анчах сывласа кăларасси сывласа илессинчен кăшт вăрăмрах пулмалла.

Кунсăр пуçне сывламасăр 40—60 секунда таран тытăнса тăма пултарни те питĕ кирлĕ. Мĕншĕн тесен, тепĕр чухне противогаза отравляющи вещество сарăлнă вырăнта тăхăнмалла пулать е юсамаллисем тĕл пулма пултараççĕ.

Отравляющи веществосемлĕ ятарласа тунă камерăна ĕçсыннисене противогазпа усă курма тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ хыççăн çеç кĕртме юрать.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăçалхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче кăларнă Указпа, Григорий Михайлович **Крючков** юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Апатçимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссарĕсен обязанноçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5499

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 448. Ф. б. 98. 84 п. л.

БИБЛИОГРАФИ

ПАРТИЗАНСЕМ

Урса кайнă фашистсен бандисене хирĕç Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотĕнчи боецсем, командирсем тата политработниксем кăна мар, пĕтĕм совет халăхĕ çапăçать. Отечественнăй аслă вăрçăн фронтĕсенчен килекен очерксенче, корреспонденцисенче, ӳкерчĕксенче вĕсен тĕлĕнмелле паттăрлăхĕпе хăюллăхĕ çинчен каласа параççĕ.

Кулленех хаçатсенче пичетленсе пыракан боевой эпизодсене пĕчĕк кĕнекесем туса кăларса, чăвашсен Государство издательстви паха ĕç тăвать. Вăл кĕнекесемпе брошюрăсем пирĕн вулакансене фронтри юлташсен çапăçу меслечĕсемпе паллаштараççĕ, тăшмана хирĕç хăюллăн та паттăрлăн, юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма вĕрентеççĕ.

«Юншăн—юн, вилĕмшĕн—вилĕм!» Çак лозунгпа тăрса çапăçаççĕ пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар флочĕ хаяр тăшмана хирĕç. Çав лозунгпа çăкленсех çапăçаççĕ тăшман тылĕнче ĕçлекен нумай пинлĕ партизансем те. Вĕсем фашистсен чаçĕсене çӳреме чăрмантарса, кĕперсене, çулсене аркатаççĕ, телефонпа телеграф сыхăнуне пăсаççĕ, тăшман боеприпасĕсен складĕсене, обозĕсене çунтара-çунтара яраççĕ. Партизансем тăшман чаçĕсене Иккĕмĕш истребительĕ, пăрăнарах çаврăнкаласа çӳресе, лейтенантăн икĕ урине те амантать.

Ыйăр аманнă лейтенант çĕрле фашистсем аркатса хăварнă пĕр ялти утара упаленсе çитет. Партизансемпе паллашать, вĕсене хăйĕн ĕçĕ çинчен каласа парать. Партизансен пытанса пурăнмалли вырăнсем те, хĕç-пăшал та, взрыв тумалли хатĕрсем те пур иккен. Вĕсем лейтенант донесенине Хĕрлĕ Çăран командованине кайса пĕлтереççĕ, хăйсем нимĕçсен боеприпассем тиенĕ транспортне сирпĕтсе яраççĕ.

Мĕн тĕрлĕ хăюллă та чее çынсем вĕсем, К. лейтенант паллашнă ялти партизансем! Утарта ĕçлекен старик, шап-шур çӳлĕ, лутра та ырханкка, нимĕçсем пырса кĕрсенех «хăлхасăр» пулса ларать:

— Анланаймастăп. Анланаймастăп. Илтместĕп тетĕп-çке. Хăлха витĕрех мар манăн, — тет фашистсен пур ыйтăвĕсене хирĕç те.

Старик те, унăн хĕрĕ Анна та, тăшмансене пĕрерĕн-пĕрерĕн персе ӳкерекен уксах снайпер Сысой та, тата ытти нумай партизансем те — вĕсем пурте пирĕн хăюллă патриотсем, тăван çĕршывшăн, чысшăн, ирĕклĕхшĕн пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр çапăçаççĕ

Ф. УЯР.